26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
23
ЫТЛАРИКУН
231(6468) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Йӗлтӗрҫӗсен ҫӗнӗ йышне хатӗрлер

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш хӗл ҫитет. Кӑҫалхи хӗле паттӑр Хӗрлӗ Ҫар отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнче геройла наступлени туса пынипе кӗтсе илчӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фронтӗнче пирӗн пултаруллӑ та хӑюллӑ йӗлтӗрҫӗ-боецсем иртнӗ хӗлсенчи наступленисем вӑхӑтӗнче чаплӑ ӗҫсем турӗҫ. Хӗлӗн йывӑр условийӗсене пӑхмасӑр, вӗсем ирсӗр тӑшмана кӗрешес ӗҫре историре пулман паттӑрлӑх кӑтартрӗҫ. Пирӗн геройла Хӗрлӗ Ҫара татах та ытларах пулӑшас тесен, йӗлтӗрҫӗсен ҫӗнӗрен ҫӗнӗ отрячӗсене хатӗрлесе памалла.

Иртнӗ хӗлле йӗлтӗрҫӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе Шупашкар, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Етӗрне районӗсенчи физкультура обществисем начар мар ӗҫлесе пычӗҫ. Асӑннӑ районсенче темиҫе ҫӗршер комсомолецпа ҫамрӑка 24 сехетлӗ программӑ тӑрӑх йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентсе кӑларнӑ. Шупашкар хулинчи физкультурӑпа спорт енӗпе ӗҫлекен инструктор Михалин, йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентекен Юдина юлташсем ку ӗҫре уйрӑмах лайӑх ӗҫлени курӑнчӗ. Шупашкарта ку ӗҫ кӑҫалхи ҫул та начар мар пырать.

Анчах чылай районсенче, Чкаловски, Шӑхасан, Канаш районӗсенче, кун ҫинчен маннӑ пулмалла. Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи физкультурпа спорт ӗҫӗсен комитечӗ, ВЛКСМ Обкомӗпе профсоюзсен обкомӗсем вырӑнсенче халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентмелли командӑсемпе отрядсем организацилес, йӗлтӗр базисем хатӗрлес ӗҫе ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ.

Шӑхасан, Октябрьски, Канаш районӗсенче те халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентме хатӗрленес тӗлӗшпе нимӗнех те туман-ха. Йӗлтӗр спорчӗн обществӑллӑ инструкторӗсене хатӗрлеме тытӑнман, йӗлтӗр базисене туман. Канаш районӗнче, сӑмахран, мӗн чухлӗ йӗлтӗр пуррине те шута илмен.

Халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес ӗҫе профсоюзпа комсомол организацийӗсен ертсе пымалла. Предприятисемпе учрежденисенче ҫамрӑк рабочисем пиншерӗн ӗҫлеҫҫӗ. Хӑшӗсем вӗсенчен всевобуч пункчӗсенче вӗренеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та профсоюз организацийӗсемпе спорт обществисен вӗсене йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес ӗҫре пулӑшса пымалла. Ку ӗҫе уҫӑлма тухнӑ пек ҫеҫ мар, ҫирӗп дисциплинӑна пӑхӑнса, программа тӑрӑх туса пымалла.

Йӗлтӗрпе ҫӳреме хатӗрленес ӗҫре кадрсем кирлӗ. Чылай вырӑнсенче ҫак ӗҫе туса пыма инструкторсем ҫитмеҫҫӗ. Лайӑх йӗлтӗрҫӗсене обществӑллӑ инструкторсем пулма уйӑрас пулать. Райсоветсем ҫумӗнчи физкультурӑпа спорт инструкторӗсен ку ӗҫе халех тытӑнмалла. Колхозсенчи ҫамрӑксене йӗлтӗрпе ҫӳреме организованнӑ вӗрентмелле.

Кӑҫалхи ҫул, РСФСР Наркомпросӗн кӑтартӑвӗ тӑрӑх, шкулсенче «Смена» ятлӑ ҫӗнӗ спорт обществи организациленӗ. Вӗренекен ачасен ҫӗнӗ обществине ытти спорт обществисем пулӑшса тӑма тивӗҫлӗ. «Смена» спорт обществи вӗренекен ҫамрӑк ӑрӑва, пулас боецсене, ӳт-пӳ тӗлӗшӗнчен ҫирӗплетмелле, чӑтӑмлӑ пулма хӑнӑхтармалла. Вӗренекенсене йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес ӗҫе пур шкулсенче те кирлӗ пек туса пымалла.

Йӗлтӗрсен материальнӑй базисене хатӗрлесси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Йӗлтӗрсене фабрикӑсенче хатӗрлессине кӗтмелле мар, мӗншӗн тесен фабрикӑсем чи малтанах фронта тивӗҫтерсе тӑрассишӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та йӗлтӗрсене кашни харпӑрхӑй тӑвас ӗҫе организацилемелле. Пӗлтӗр ку ӗҫ начар мар пулса пынӑччӗ, кӑҫалхи ҫул ӑна татах та лайӑхрах йӗркелемелле.

Йӗлтӗрҫӗшӗн хальхи вӑхӑт — тренировкӑсем тумалли хаклӑ вӑхӑт пулса тӑрать. Йӗлтӗрпе ҫӳреме тата йӗлтӗр ҫине тӑрса ҫапӑҫма вӗренес тесен, чӑтӑмлӑ та тӳсӗмлӗ, патвар шӑмшаклӑ пулмалла, кашни кунах тренировкӑллӑ занятисем ирттермелле, ҫырма-ҫатраллӑ вырӑнсенче походсем тумалла, ҫак енӗпе оборона значокӗсен нормисене памалла.

Йӗлтӗрҫӗсене хатӗрлесси — оборонӑллӑ питех те пысӑк ӗҫ. ВКП(б) райкомӗсемпе горкомӗсен, ВЛКСМ райкомӗсемпе горкомӗсен ку ӗҫри ҫитменлӗхсене халех пӗтерсе, халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентессине лайӑхлатас тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнмалла.

ВЛКСМ Обкомӗн, физкультурӑпа спорт ӗҫӗсен республикӑри Комитечӗн ку ӗҫе куллен йӗркеллӗ туса пымалла.

Государствӑна тырӑ сутса, Хӗрлӗ Ҫара ҫӗнтерӳ тума пулӑшар!

Ҫӗнтерӳ тума

Комсомольски районри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ И. П. Краснов юлташ государствӑна 100 пӑт тырӑ сутнӑ

Социализмлӑ ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсыннисем нимӗҫ оккупанчӗсене хӑвартрах пӗтерсе тӑкас ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара пур енчен те пулӑшса тӑма тӑрӑшаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв колхозсемпе колхозниксене государствӑна ирӗккӗн тырӑ сутса, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма чӗннине пирӗн республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем патриотла ответлеҫҫӗ.

Комсомольски районри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Иван Петрович Краснов юлташ государствӑна 100 пӑт тырӑ сутрӗ. Государствӑна тырӑ сутас ыйтупа пухӑннӑ колхозниксен пухӑвӗ хавхалануллӑ пулса иртрӗ.

Ватӑ колхозник Самуил Трофимов пухура хӗрӳллӗ сӑмах каларӗ. Вӑл ватӑ пулсан та, колхозра пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшса ӗҫлет. Государствӑна хӑйӗн тыррине 50 пӑт сутрӗ. Ҫавӑн пекех Георгий Филимонов колхозник тата ытти нумай колхозниксем те государствӑна 20—30-шар пӑт тырӑ сутаҫҫӗ.

* * *

Государствӑна тырӑ сутас ӗҫ Шупашкар районӗнчи колхозсенче те хӑвӑрт сарӑлса пырать. Иккассинчи «Майӑн 1-мӗшӗ» колхозра ӗнер пуху пулса иртрӗ. Колхозниксем пӗр шухӑш-кӑмӑлпа государствӑна 4880 пӑт тырӑ сутма пулчӗҫ.

А. МОИСЕЕВА.

Комбайнпа тырӑ вырас ӗҫӗн мастерӗ Петр Маркиянов 100 пӑт сутать

ЙЕПРЕҪ, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Машинно-тракторнӑй станцире паян савӑнҫлӑ пуху. Сталин юлташӑн историллӗ доклачӗпе тата Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнӗрен ҫӗнӗ чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланнӑ трактористсемпе комбайнерсем тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫшӗн мӗнпур вӑя пама хатӗр.

Пуху уҫӑлман-ха. Трактористсемпе комбайнерсем пӗр-пӗрин хушшинче савӑнӑҫлӑн калаҫса ҫӳреҫҫӗ.

— Ҫапӑҫмасӑр, вӑя хумасӑр ҫӗнтерме ҫук. Ҫӗнтерӗве ӑна ҫапӑҫса туянаҫҫӗ, — тет комбайнпа тырӑ вырас ӗҫӗн мастерӗ Петр Маркиянович Маркиянов. Вӑл кӑҫал комбайнпа 403 гектар тырӑ вырса пуҫтарнӑ, 555 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Урӑхла каласан, Маркиянов юлташ комбайнпа тырӑ вырса пуҫтармалли сезонри плана 370 процент тултарнӑ.

Анчах тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларма, хӑйӗн ҫитӗнӗвӗпе мухтанма вӗренмен Петр Маркиянович. Вӑл ӑнланать: ҫӗнтерӳ ҫывӑх, анчах ӑна тӗпӗ-йӗрӗпех алла ҫавӑрса илес тесен, ҫӗнӗрен ытларах вӑй хуни, фронта пур майсемпе те вӑйлӑн пулӑшса тӑни кирлӗ.

Пуху пуҫланать. Унта государствӑна хӑйсен ирӗкӗпе тырӑ сутасси ҫинчен сӳтсе-явма тытӑнчӗҫ. Кун ҫинчен пӗлсенех, малтанхи сӑмаха Петр Маркиянов илчӗ.

— Пирӗн юратнӑ ҫулпуҫӑмӑр Сталин юлташ ӗҫсынни депутачӗсен Мускав Совечӗн кӑҫалхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче пулса иртнӗ чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ докладра ҫапла ӑсӑрхаттарчӗ: «Эпир тӑшмана аркатса тӑкас вӑхӑта ҫывхартмалли мӗнпур майсемпе усӑ курманни хамӑр Тӑван ҫӗршыв умӗнче, фашистла чуралӑха вӑхӑтлӑха кӗрсе ӳкнӗ совет ҫыннисем умӗнче, нимӗҫ чуралӑхӗнче асапланса пурӑнакан Европа халӑхӗсем умӗнче преступлени туни пулӗччӗ. Тӑшмана сывлӑш ҫавӑрса илме памалла мар»,—терӗ. Тӑшмана тӗпӗ-йӗрӗпех ҫапса аркатмашкӑн хамӑрӑн пӗтӗм вӑя хурас пулать. Эпӗ кӑҫал тӑрӑшса ӗҫлесе тырӑ нумай илтӗм. Тӑшмана аркатса тӑкас сехете хӑвӑртрах ҫывхартас тесе, эпӗ хамӑн хуҫалӑхри 100 пӑт тырра государствӑна сутатӑп.

Маркиянов юлташӑн пархатарлӑ тӗслӗхӗ пухури трактористсемпе комбайнерсене хавхалантарчӗ.

— Эпӗ те 40 пӑт сутатӑп, — терӗ 8-мӗш номерлӗ трактор бригадин бригадирӗ Воробьев юлташ.

— Ҫырӑр 30 пӑт, — терӗ 11-мӗш трактор бригадин учетчикӗ Клава Одинцова. — Ҫӗнтерӳшӗн нимӗн те шел мар.

Ҫавӑн пекех трактористка Ольга Николаева 20 пӑт, трактористка Ф. Захарова 25 пӑт сутма кӑмӑл турӗҫ. Комбайнер Иванов та вӗсенчен юлмарӗ, вӑл государствӑна 30 пӑт тырӑ сутрӗ.

Ҫапла вара государствӑна хӑйсен ирӗкӗпе тырӑ сутас ӗҫе пирӗн МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Ку ӗҫ халӗ пуҫланчӗ кӑна-ха, унта хутшӑнмасӑр пӗр комбайнерпа тракторист та юлмасть

Г. ИВАНОВ,
МТС директорӗ

Тимӗрҫӗ Гордеев 30 пӑт сутрӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Сталин юлташ ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ хӑйӗн докладӗнче тӑван ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫара малашне те активлӑн пулӑшса тӑма чӗнчӗ. Сталин юлташ колхоз хресченӗсем фронта пулӑшас тӗлӗшпе тунӑ ӗҫсене пысӑка хурса хакларӗ, колхозниксемпе колхозницӑсем нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех пӗтерсе тӑкас ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара малашне те пысӑк пулӑшу парса тӑрасси ҫине пысӑк шанчӑк хуни ҫинчен каларӗ. Аслӑ ҫулпуҫ сӑмахне кашни колхозникпе колхозница пӗтӗм чун-чӗререн кӑмӑлласа йышӑнчӗ. Хӗрлӗ Ҫара татах та вӑйлӑнрах пулӑшса тӑма тупа турӗ.

Красноармейски районри колхозсенче государствӑна тырӑ сутас ӗҫ вӑйлӑн сарӑлса пырать. Халь пулса иртекен пухусенче колхозниксем ытлашши тырра йӑлтах патшалӑха сутма йышӑнаҫҫӗ. Пӗрлешӳллӗ фондри ытлашши тырра сутнисӗр пуҫне, нумай колхозниксем хӑйсем тимлӗн ӗҫлесе илнӗ тырра государствӑна сутаҫҫӗ.

«Янмурзино» колхозри паллӑ тимӗрҫӗ Лаврентий Гордеев государствӑна 30 пӑт тырӑ сутрӗ. Тимӗрҫӗ-патриотран Лаврентьев Варфоломей колхозник те, колхоз счетоводӗпе председателӗ те юлмарӗҫ. Вӗсем пурте государствӑна 25—35-шер пӑт тырӑ сутрӗҫ. Колхоз государствӑна пурӗ икӗ пин пӑт ытла тырӑ сутма йышӑнчӗ.

Н. ГРИГОРЬЕВ.

Сталин юлташ чӗннине ответлесе

ЕТӖРНЕ, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Сталин юлташ доклачӗ районри колхозниксемпе колхозницӑсене пӗтӗм чун-чӗререн хавхалантарчӗ. Аслӑ ҫулпуҫ пирӗн ӗҫе тивӗҫлипе хакларӗ, эпир малашне татах та тимлӗреххӗн ӗҫлеме пулатпӑр, — теҫҫӗ вӗсем митингсемпе пухусенче.

Аслӑ ҫулпуҫ фронта пулӑшассишӗн татах та тимлӗнрех ӗҫлеме чӗннине ответлесе, колхозниксемпе колхозницӑсем ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑртӑва анлан сарса пыраҫҫӗ. Районри чылай колхозсем хуҫалӑхра перекетлесе усранӑ тырпула государствӑна сутаҫҫӗ. Чаканарти «Парижская Коммуна» колхоз членӗсем государствӑна 210 пӑт тырӑ сутрӗҫ.

Тӑшмана ҫӗнтерес сехете ҫывхартасси пирӗн кулленхи ӗмӗт, тӑшмана ҫӗнтерме мӗн кирлине эпир пурне те ытлӑн-ҫитлӗн парса тӑрӑпӑр,—теҫҫӗ колхозниксемпе колхозницӑсем.

„Хӗрлӗ Ҫар пирӗн пурнӑҫа сыхлать, эпир ӑна пӗтӗм вӑйран пулӑшатпӑр“

ЭЛЕК, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Лупашкӑри «Трудовик» колхозра кун пек пухусем сахал пулнӑ. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явас ыйтупа пуху пуласси ҫинчен пӗлтерсенех, колхозниксемпе колхозницӑсем, пурте пӗр ҫын пек пулса, активлӑн пухӑнчӗҫ.

Пухура райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ Волков юлташ колхоз хресченӗсен ӗҫне аслӑ ҫулпуҫ пысӑккӑн хаклани, ҫӗнтерӳ тума татах та хастарлӑнрах ӗҫлеме чӗнни ҫинчен каласа пачӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсем ҫӗнтерӳшӗн пулсан нимӗн те шеллесе тӑманни ҫинчен тухса каларӗҫ.

— Эпир фронта пулӑшас тесе начар мар ӗҫлерӗмӗр,—терӗ колхоз председателӗ Николаев юлташ. — Ҫӗнтерӳ ҫывӑх ӗнтӗ. Нимӗҫ захватчикӗсене хамӑрӑн тӑван ҫӗршывран тӗпӗ-йӗрӗпех тасатас тесен, пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара татах та ытларах пулӑшмалла. Эпӗ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас шутпа, государствӑна 35 пӑт тырӑ сутатӑп. Пур колхозниксене те манӑн примера йышӑнма сӗнетӗп.

Колхоз счетоводӗ Кузьмин юлташ государствӑна 25 пӑт тырӑ, ферма заведующийӗ П. Николаев юлташ 12 пӑт, колхозница Григорьева 15 пӑт, 70 ҫулхи колхозник Николаев 10 пӑт сутма пулчӗҫ. Нумай колхозниксемпе колхозницӑсем 5—10-шар пӑт сутма сӑмах пачӗҫ.

Пуху хыҫҫӑнах колхоз государствӑна сутма палӑртнӑ тырра хӗрлӗ обозсемпе хатӗрлев пунктне леҫрӗ.

Х. ЛИСИН.

Тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма

СЕНТЕР, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницӑсем халӗ пурте пӗр тӗллевпа—тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма фронта ытларах пулӑшас тӗллевпа пурӑнаҫҫӗ. Нумай колхозниксемпе колхозницӑсем, Сталин юлташ чӗннине ответлесе, ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑваҫҫӗ.

Кӑҫал колхозсем тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ. Вӑл тырпула перекетлӗн тытса усрасан, ҫимелӗх те, сутмалӑх та пур. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ нумай колхозниксем государствӑна тырӑ сутаҫҫӗ. Шупуҫ ялсоветӗнчи «Знамя труда» колхоз членӗсем, пурте тенӗ пекех, государствӑна тырӑ сутма пулчӗҫ. Колхоз пурӗ 40 центнер тырӑ сутать.

Районри ытти колхозсенче те государствӑна тырӑ сутас ыйтупа пулакан пухусем пысӑк ҫӗкленӳпе иртеҫҫӗ.

М. КАРПОВ.

Хуҫалӑхра перекетленӗ тырпула—государствӑна

КУСЛАВККА, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем хӑйсен хуҫалӑхӗнче перекетленӗ тырпула государствӑна сутаҫҫӗ. Ӗнер колхозниксемпе колхозницӑсем районри хатӗрлев пунктне 4.722 пӑт тырӑ илсе пычӗҫ. «Правда» колхоз 4.000 пӑт, «Динамо» колхоз 1.500 пӑт сутнӑ. Районри колхозсенче пулса иртнӗ пухусенче темиҫе ҫӗр колхозникпе колхозница государствӑна тырӑ сутма кӑмӑл тӑваҫҫӗ.

Г. КРЮЧКОВ.

* * *

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Нумай колхозсенче государствӑна тырӑ сутас ыйтупа пухусем пулса иртрӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен тыррине государствӑна сутма пулаҫҫӗ. Ҫапла, «Агроном» колхоз членӗсем 3.000 пӑт, «Новый путь» колхоз членӗсем 1.000 пӑт, «Коминтерн» колхоз членӗсем 4.000 пӑт сутма пулнӑ. «Агроном» колхоз 150 пӑт, «Новый путь» колхоз 200 пӑт тырӑ сутнӑ та ӗнтӗ.

ВЦСПС-па ССР Союзӗн аш-какайпа сӗт-ҫу промышленность Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС тата ССР Союзӗн аш-какайпа сӗт-ҫу промышленность Халӑх Комиссариачӗ, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1943 ҫулхи октябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Сӗнтӗрвӑрринчи «Марпосадский» совхоза выльӑх-чӗрлӗх самӑртас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫленӗшӗн, виҫҫӗмӗш преми памалла тунӑ.

Европӑри Консультаци комиссине Совет Союзӗн главнӑй представительне уйӑрса лартни

Мускаври конференци Лондонра Европӑри Консультаци комиссине тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ решени тӑрӑх, Совет правительстви ҫав комиссире Совет Союзӗн главнӑй представителӗ пулса ӗҫлеме Совет Союзӗн Великобританири посолне Ф. Т. Гусев юлташа уйӑрса лартнӑ.

Лазарь Моисеевич Каганович юлташа

Большевиксен партийӗн Центральный Комитечӗ тата СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Эсир ҫурални 50 ҫул тултарнӑ кун Сире, Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ юлташне, коммунистсен партийӗн тата Совет государствин ҫав тери паллӑ деятельне, хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Сире, пирӗн хаклӑ тусӑмӑр тата юлташӑмӑр, нумай пурӑнмашкӑн тата совет халӑхӗшӗн малашне те ӑнӑҫлӑн ӗҫлесе тӑмашкӑн пӗтӗм чунтан чӗререн сунатпӑр.

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ.

СССР ХАЛӐХ КОМИСАРӖСЕН СОВЕЧӖ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Ҫулйӗр Халӑх Комиссарне Л. М. Каганович юлташа Ленин орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗ Л. М. Каганович юлташ ҫурални 50 ҫул тултарнӑ май тата вӑл партипе совет халӑхӗшӗн ҫав тери паха ӗҫсем тунине шута илсе, Лазарь Моисеевич Каганович юлташа Ленин орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1943 ҫулхи ноябрӗн 21-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 20-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 20-мӗшӗнче ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри вырӑнта, пирӗн ҫарсем тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене чылай лайӑхлатнӑ.

ЧЕРКАССЫ енче пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗн сылтӑм енчи плацдармсене лайӑхлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

КОРОСТЫШЕВ районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк сухату тӳстернӗ.

ПРИПЯТЬ шывӗн анатри тӑрӑхӗнче пирӗн ҫарсем Киев облаҫӗнчи НОВО-ШЕПЕЛИЧИ ятлӑ район центрне тата ҫавӑн пекех ЧИСТОГАЛОВКА, БУРАКОВКА, СТАРАЯ КРАСНИЦА, ТОЛСТЫЙ ЛЕС ятлӑ ялсене тата ЯНОВ, БУРАКОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене йышӑнса илнӗ.

РЕЧИЦА районӗнче пирӗн ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, темиҫе яла тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата тупӑсемпе минометсенчен персе тӑнӑ.

Ноябрӗн 19-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче тӑшманӑн 78 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 15 самолетне персе ӳкернӗ.

НОЯБРӖН 21-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 21-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫса пырса, тӑшмантан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ БРАТСКИЙ, ЛЮБИМОВКА, АЛЕКСАНДРО-БЕЛОВО, ВЛАДИМИРОВКА, ЧЕРНИГОВКА, АВДОТЬЕВКА, МАРЬЕВКА ятлӑ тӗреклӗ пунктсене тата НЕЗАБУДИНО ятлӑ чугун ҫул станцине тытса илнӗ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ УСПЕНСКОЕ, МОРОЗОВКА, ЗЫБКОЕ, ИВАНОВКА, КАМБУРЛЕЕВКА, ОМЕЛЬНИК, БАШМАКОВА, ЗОЛОТАРЕВКА ятлӑ тӗреклӗ пункчӗсене тытса илнӗ.

КОРОСТЫШЕВ районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсем тунӑ атакӑсене сире-сире янӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника енчен пысӑк сухату кӳнӗ.

РЕЧИЦА хули районӗнче пирӗн ҫарсем, настулени туса пырса, тӑшмантан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ БЕРЕГОВАЯ СЛОБОДА, ГОРБЫЛЬ, ДЮРДЕВО, СВЯТОЕ, ДУБРОВА, ЕЛИЗАРОВИЧИ, БУШЕВКА, КОБЫЛЕВО, ЛЕСНОЕ, ДУХАНОВКА, РУДНЯ—БУРИЦКАЯ, ВОЛЧЬЯ ГОРА, ЯМПОЛЬ, АДАМОВКА, СТЕПАНОВКА, ЗАСПА, ГОРОДОК, ГОРОШКОВО, БРОННОЕ, ЖМУРОВКА, КАЗАЗАЕВКА ятлӑ тӗреклӗ пунктсене тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Ноябрӗн 20-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 174 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 13 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывӗн кукринче, Днепропетровскран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ, тӑшмантан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пункт тата Незабудино чугун ҫул станцине тытса илнӗ. Ҫав станцишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче совет подразделенийӗсем нимӗҫсен 900 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Пӗр Марьевка ятлӑ ялта кӑна 15 тупӑ, боеприпаспа ҫар пурлӑхӗн склачӗсене тытса илнӗ. Тепӗр участокра пӗр соединени чӑҫӗсем, тӑшманӑн хаяр контратакисене сире-сире ярса, гитлеровецсене пӗр батальона ҫити вӗлерсе пӗтернӗ тата нимӗҫсен 9 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 туппине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кременчуг хулинчен кантӑртарахра пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене тытса илнӗ. Совет чӑҫӗсен наступленине чарма хӑтланса, нимӗҫсем хӑйсен танкӗсемпе мотопехотин пысӑк вӑйӗсене контратакӑсене кӗртсе янӑ. Хаяр ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ. Пирӗн ҫарсем тӑшмана пысӑк сухату кӳнӗ. Тӑшмана каялла чакма лекнӗ. 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. 60 танк ытла, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 10 тупӑ, 50 хир туппи, бронетранспортерсемпе автомашинӑсем нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 57 тупӑ, 100 пулемет ытла, 98 автомашина, ҫар пурлӑхӗн 3 складне тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Коростышев районӗнче пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшманӑн танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсемпе ҫапӑҫнӑ. Пӗр участокра нимӗҫсен танкӗсем умлӑхыҫлӑн виҫӗ хут хаяр атака тунӑ. Пирӗн артиллери вӑйлӑн пенипе, нимӗҫсене каялла чакма лекнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн персе ҫӗмӗрнӗ е сунтарса янӑ 38 танкӗ тӑрса юлнӑ. Ҫавӑн пекех тата пирӗн позицисене атакӑлама тӑнӑ тӑшман пехотине те пысӑк сухату кӳнӗ. Тепӗр участокра пӗр соединени чӑҫӗсем, гитлеровецсен атакисене сире-сире ярса, 14 танк пӗтерсе тӑкнӑ тата 1.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Речица хули районӗнче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла тытса илнӗ. Пӗр районра пирӗн боецсене партизансем пысӑк пулӑшу панӑ. Совет патриочӗсем, тылран пырса ҫапса, нимӗҫсен оборонине йӗркерен кӑларнӑ. Пирӗн подразделенисем тӑшман пӑтранса кайнипе хӑвӑрттӑн усӑ курнӑ та нимӗҫсене халӑх пурӑнакан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пунктран ҫапса кӑларнӑ. Тепӗр участокра пӗр соединени боецӗсем

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

кун каçиччĕнхи çапăçусенче 600 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Полесье облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ виçĕ кун хушшинче (ноябрĕн 8-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче) нимĕçсен 7 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 5 паровоз тата çар техникипе çар материалĕсем турттарса пыракан 40 вагон ытла пĕтернĕ. Çав эшелонсене сыхласа пыракан гитлеровецсене 150 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ е амантнă.

Полесье облаçĕнчи партизансен шоссе çулĕн пĕр участокĕнче кĕрешекен отрячĕ, минăсем лартса, нимĕçсен 3 танкне тата 25 автомашинине сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсене засадăсенчен татти-сыпписĕр тапăнса пырса, совет патриочĕсем тăшмана сынсем тĕлĕшпе пысăк çухату кӳнĕ.

* * *

Нимĕçсен 258-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 478-мĕш полкăн 4-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Альфред Малицкий çапла каласа кăтартнă: «Российăпа вăрçса, пирĕн дивизи питĕ пысăк çухату тӳсрĕ. Дивизи çулĕ нимĕçсен виллисемпе тулса ларнă. Дивизин Наро-Фоминскри масарĕ çинче нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла пытарнă, Тросна патĕнчи масар çинче—400 çын. Ржев районĕнче пирĕн пĕр полка пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç. Поездсемпе пынă чухне крушенисем пулнă пирки темиçе çĕр салтак пĕтнĕ. 1943-мĕш çулхи июль уйăхĕн пуçламĕшĕнче 258-мĕш дивизи нимĕç çарĕсем Курска тапăннă наступленире пулчĕ, çав наступленире ăна парчах вăйсăрлатса хăварчĕç. Август уйăхĕнче дивизие салтаксем çĕнĕрен хушса пачĕç те Сталино районне куçарса кайрĕç. Сталиноран эпир пĕрмаях каялла чакса пыратпăр, хамăрăн пĕтĕм пурлăха çухатса пĕтерсе тĕмĕр. Нимĕç çарĕ юлашки вăхăтра тӳснĕ поражениссем нимĕç салтакĕсем çар пуçлăхĕсене шаннине пĕтерсе пăрахрĕç. Халĕ пирĕн Гитлер йăнăшĕсемшĕн хамăрăн пуçсемпе тӳлемелле пулать».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Запорожье облаçĕнчи Приазовски районра тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакма пуçласан, фашистла захватчиксем пирĕн ялсене йăлтах çаратса тухрĕç. Районри 9 колхозра кăна нимĕçсем пурăнмалли 656 пӳртпе мĕнпур хуралтăсене ишсе антарчĕç е çунтарса ячĕç. Приазовское ялĕнче гитлеровецсем электростанцие, МТС-а, 9 шкула, больницăна, почтăна тата ытти обществăллă çуртсене пĕтерсе тăкрĕç. Хăйсем пуçпулса тăнă вăхăтра нимĕçсем Германи каторгине 150 совет гражданне ытла ирĕксĕрлесе хăваласа кайнă. Пуринчен те ытларах пирĕн ялта нимĕçсен район коменданчĕ Пфаф, унăн помощникĕсем — Райтер, Фолькмер тата Фотонгауэр ирттĕнсе кайрĕç. Вĕсем халăха çаратрĕç, ним айăпсăр мирлĕ çынсене вĕлерчĕç, пурăнмалли çуртсене çунтара-çунтара ячĕç.

Каялла чакма пуçличчен темиçе кун маларах гитлеровецсем ялти нумай çынна арестлерĕç те тĕрмене хупса лартрĕç. Вĕсене пурне те персе пăрахма хатĕрленнĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем пирĕн яла вăркăнса кĕчĕç те тĕрмери совет граждансене ирĕке кăларчĕç, вĕсен пурнăçне çăлса хăварчĕç».

Акт çине алă пуснă: ялсовет председателĕ Гук, врач Подольный, учительница Сикорева, Астахова, Гридасов, Косенко тата ытти ытти çынсем те..

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкар районĕнчи «Хочахмат» колхозри ударница **Е. Ф. Федорова.** Вăл — фронтовик арăмĕ. Унăн 4 çамрăк ача пулсан та вăл кăçал 300 ĕçкунĕ ытла тунă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

КАЛИНИНО. (**Хамăр корр.**). Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнчи приказĕпе докладне анлăн ăнлантарса панă хыççăн, районри колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ. 28 колхоз вăрлăх фрончĕсене пĕтĕмпех хывса çитерчĕç, 16 колхозра вăрлăх валли уйăрнă тырра триерсемпе сортлама тытăннă. Паянхи кун тĕлне триерсемпе пурĕ 2678 центнер вăрлăх сортланă. 412 плуг юсанă.

Çуракине хатĕрленес ĕç Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхозра уйрăмах лайăх пулса пырать. 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах, унти колхозниксем ялхуçалăх машинисене, ĕç хатĕрĕсене, транспорт инвентарĕсене уйхиртен пуçтарса кĕртрĕç, лайăх хуçасем пек тасатса, çу сĕрсе лартрĕç. Колхоз тимĕрçи Волков вĕсене юсама тытăнчĕ. Паянхи куна çитсе вăл 4 сеялка, 20 плуг юсанă ĕнтĕ, колхозниксем пулăшнипе çĕнĕрен 40 сӳре тунă.

Çураки валли колхозăн 550 центнер вăрлăх хатĕрлемелле. Колхоз вăл тырра амбарсене уйăрса хунă, вăрлăхсене тасатса сортлама бригада организациленĕ.

Вăрлăх сортлакан колхозницăсем хастарлăн ĕçлеççĕ. Хушнă ĕçе тĕплĕн те хăвăрт тăваççĕ. Вера Волкова, Мария Николаева, Ксения Пигушова, Анна Маркова кашни кунах, ĕçе ир-ирех тухса, кунне 15 центнер тырă сортлас вырăнне 16—18 центнер сортлаççĕ. Вĕсем, хастарлăн ĕçлесе, триерпа 445 центнер вăрлăх сортланă та ĕнтĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах пĕтерсе, çĕнтерӳ сехетне çывхартас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ колхозниксем. Вĕсем фронтпа тăван çĕршыва малашне те вăйлăн пулăшса тăма тупа тăваççĕ. Сталин юлташăн докладне кашни колхозникпе колхозница тĕплĕн ăнланса илчĕç. Çитес çул татах та тухăçлăрах тырпул ӳстерсе илессишĕн кĕрешĕве хутшăнса, вĕсем декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитме, январĕн 1-мĕшĕ тĕлне урапасене, рыдвансемпе бестаркăсене юсаса лартма сăмах пачĕç.

Агротехника правилисене вĕренме колхозра кружок организациленĕ. Кружокăн малтанхи занятийĕсем пулса иртрĕç. Ана колхоз председателĕ И. Николаев юлташ хăй ертсе пырать.

Ӳкерчĕк çинче: пĕр заводри металлурги цехĕнчи стахановец **Н. Л. Интриллигатор** юлташ. Вăл ĕç нормине яланах 270—350 процент тултарать. Юлашки уйăхсенче 5 çынна çĕнĕ профессие вĕрентнĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тракторсене тĕплĕн юсарĕç

ЕЛЧĔК. (**Телефонпа**). МТС-ра тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсакан бригадăсем, трактористсемпе комбайнерсем Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнчи докладĕ çине ĕç тухăçлăхне ӳстернипе ответлерĕç. Тракторсене юсакан бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçланса кайрĕ.

Охоткин юлташ бригадир пулса ертсе пыракан 7-мĕш номерлĕ трактор бригади ĕнер хăйĕн пур тракторĕсене те юсаса пĕтерчĕ. Тракторсене тĕплĕн юсанă.

П. ЯШИН,
МТС директорĕ.

Илнĕ обязательствăна пурнăçлама тытăнчĕç

ЭЛĔК. МТС коллективĕ Сталин юлташăн доклачĕпе паллашнă хыççăн, малашне тата лайăхрах ĕçлеме пулса, татăклă обязательствăсем илчĕ. Вăл январь уйăхĕччен 16 трактор юсама, МТС мастерскойĕнче 1.200 тенкĕлĕх машина пайĕсем тума тата 3.400 тенкĕлĕх кивĕ машина пайĕсене çĕнетсе юсама пулчĕ.

Трактористсем хăйсен сăмахне пурнăçлама тытăнчĕç. Халĕ трактор бригадисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Трактористсем кунне 12-шер сехет ĕçлеççĕ. Тимĕрçĕ Кузнецов юлташ машина пайĕсем тунă çĕрте нормăна кунсерен 110—120-шер процент тултарса пырать. Семенов коммунистăн трактор бригади çак кунсенче икĕ трактор юсаса пĕтерчĕ. Ыттисене те çак уйăхрах юсаса çитерет.

С. САПЕРКИН.

Сад лартса хăварчĕç

КАЛИНИНО. Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз кăçал кĕр пулас умĕн сад пахчи лартса хăварчĕ. Унта улмуççи, слива, хурлăхан, чей çырли йывăççисем нумай лартнă.

Б. ШОРНИКОВ.

Фронтовой бригадăсен çитĕнĕвĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ фронта пулăшассине вăйлатма чĕнсе каланине комбинатри рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, ытларах та ытларах продукци туса кăларнипе ответлеççĕ. Плана тултарас тĕлĕшпе уйрăмах комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем пример кăтартаççĕ. Вĕсем кашни цехрах социализмлă ăмăртăвăн организаторĕсем пулса тăчĕç.

Зимин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра 7 фронтовой бригада. Пурте вĕсем хăйсене панă задание 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ. Сăмахран, Ломтев юлташ бригади (унта пурте çамрăк рабочисем) октябрьти задание 2,5 хут ирттерсе тултарнă пулсан ноябрь уйăхĕнче виçĕ норма тултарса ĕçлет.

— Виçшер çыншăн ĕçлесси — пирĕншĕн закон пулса тăмалла. Çапла ĕçленипе эпир фронтовой бригада чапне ӳстерме тивĕçлĕ, — теççĕ бригада членĕсем.

Юлашки вăхăтра Челбаев юлташ бригади те çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлет, вăл плана 200 процент, уйрăм кунсенче 250 процент тултарать. Бригадăра ĕç нормине 170 процентран кая тултаракансем пачах та çук.

Назаров юлташ ертсе пыракан цехра та фронтовой бригадăсем ăмăртура малта пыраççĕ. Юлашки вăхăтра кунта çĕнĕрен 2 фронтовой бригада организациленĕ.

Ют çĕршывсенче

ПАРЛАМЕНТРИ АНГЛИПЕ РОССИЯ КОМИТЕЧĔН БЮЛЛЕТЕНĔ КĂЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ (ТАСС). Парламентри Англипе Россия комитечĕн бюллетенĕнче (çав комитетăн председателĕ — парламент членĕ Маклин) ССР Союзĕн хĕвеланăç енчи чикки çинчен çапла каланă: «Совет территорине нимĕç захватчикĕсенчен план тăрăх ирĕке кăларасси çинчен сӳтсе-явнă чухне Англи хаçачĕсем Совет Союзĕн хĕвеланăç енчи чиккисем çинчен питех те пăтраштарса çырчĕç. Çакăн пирки телĕр хут çапла каламалла пулать: ССР Союзĕн хĕвеланăç енчи чикки —1941-мĕш çулхи июнь уйăхĕнчи чикĕ пулмалла».

Статья авторĕ, совет чикки мĕнле пулассси çинчен тĕплĕн каласа панă хыççăн, Польша премьер-министрĕн Миколайчикăн ноябрĕн 11-мĕшĕнче каланă сăмахĕ пирки калать. Миколайчик вăл çакăн пек каланă пулнă: «Пулса иртнине манса, поляксем Совет Российипе туслă çыхăну тытма хатĕр», тенĕ пулнă. Статья авторĕ çапла ыйтать: «Эпир ăнланаймастпăр, Миколайчик мĕне манма хатĕрши вăл? Совет Союзĕн белоруссемпе украинецсем пурăннă территорине 1920-мĕш çулта законсăр тытса илсе, ăна кайран Польша правительствипе çĕр улпучĕсем çирĕплетнине манма хатĕр-и? Е вăл çав халăхсене 1939-мĕш çулта Польша пусмăрĕнчен ирĕке кăларнине манма хатĕр-и? ССР Союзĕнче Польша патриочĕсен союзĕ тата Польша дивизийĕ пур. Вĕсем пурнăç çине тӳррĕн пăхаççĕ, вĕсем вăйлă та никама пăхăнман Польша республики пултăр тесен, поляк мар халăхсене хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшни мар, Совет Союзĕпе алла-аллăн тытăнса кĕрешсе пĕрле ĕçлени, нимĕç захватчикĕсене Совет Союзĕпе Польша çĕрĕ çинчен пĕрле хăваласа кăларни кирлине пĕлеççĕ», тет.

МОСЛИЕ ТĔРМЕРЕН КĂЛАРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине, шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăхăн министрĕ Моррисон хушнă тăрăх, Лондонри тĕрмерен Англири фашистсен пуçлăхне Освальд Мослие тата унăн арăмне ирĕке кăларса янă. Мослие тĕрмене государствăна сыхлас закон тăрăх 1940-мĕш çулхи çуркунне хупса лартнă пулнă.

Халĕ Мослие тĕрмерен унăн сывлăхĕ начарланса çитнĕ тесе кăларнă.

ТУРЦИ ХАÇАЧĔ АВСТРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

СТАМБУЛ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Турцин «Ла тюрки» ятлă хаçачĕ Австрире гитлеровецсемшĕн калама çук йывăр лару-тăру пулса тăни çинчен пĕлтерет. Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Вена урамĕсенчен пĕринче трамвайпа ларса пыракан çынсемпе гитлеровецсем хушшинче пысăк хирĕçӳ тухса кайнă. Трамвай çулĕ çинче халăх туллипе трамвайсем иртсе каяйман. Тӳпелешӳ ытти трамвайсенчен тухнă çынсем те хутшăннă. Пурĕ çирĕм çын суранланнă. Гестаповецсем 45 çынна арестленĕ. Çав урама çавăрса илнĕ, çынсем çӳресси вара тепĕр кунне тин пуçланнă.

Юлашки вăхăтра, тесе çырать хаçат, Вена хулине питĕ нумай гестаповец тата гитлерла аслă чиновниксем килсе тулнă. Вена çывăхĕнчи Баден хулинче гитлерла представительсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Унта вĕсем Австрири лару-тăру çинчен сӳтсе-явнă. Çав канашлура тухса каланă çав район гауляйтерĕ «пораженилле шухăш-кăмăллă çынсемпе тата сиенлĕ сас-хурасене саракансемпе кĕрешессине» вăйлатма хушнă. Çĕршывра Германие хирĕçле листовкăсем нумай салатаççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943 çулхи иккĕмĕш çур çулти плана ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Ӗпреç	88,1	69,5	1	1
Çĕнтĕрвăрри	80,0	66,1	2	6
Канаш	69,7	66,4	3	5
Улатăр	69,6	67,4	4	4
Шăхасан	68,8	67,9	5	3
Вăрмар	68,3	64,3	6	2
Вăрнар	65,4	54,9	7	10
Сĕнтĕр	61,4	38,7	8	22
Ишлей	61,3	43,1	9	16
Çĕрпӳ	61,0	61,6	10	9
Калинино	58,5	47,0	11	12
Первомайски	57,0	63,6	12	7
Комсомольски	56,5	36,4	13	24
Елчĕк	55,4	41,8	14	18
Советски	53,4	40,1	15	20
Элĕк	54,0	41,3	16	19
Куславкка	51,6	46,4	17	14
Шупашкар	52,4	30,3	18	21
Çĕмĕрле	47,6	42,3	19	17
Красноармейски	45,9	44,3	20	15
Етĕрне	43,0	36,7	21	23
Октябрьски	42,2	33,0	22	25
Тăвай	35,2	63,4	23	8
Хĕрлĕ Чутай	31,3	32,4	24	26
Шăмăршă	30,6	47,4	25	11
Чкаловски	30,5	29,0	26	27
Пăрачкав	27,2	46,5	27	13
Кувакино	4,0	26,6	28	28

ĔÇ ХĂВĂРТЛĂХĔ ӲСЕТ

ӖПРЕÇ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Вăрманпромхоз коллективĕ Сталин юлташăн докладне çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлет. Вăл чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе иккĕмĕш çур çулти плана ăнăçлăн тултарса пырать. Вăрман хатĕрлевĕнче фронтовой уйăхлăх пуçланнă хыççăн кунта ĕç хăвăртлăхĕ ӳссех пырать. Халĕ вăрманта ĕçлеме колхозниксемпе колхозницăсем чылай килчĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ малтанхи кунсенчех нормăна ирттерсе тултарма тытăнчĕç. Çапла, «Победа» колхоз членĕ Евграфов юлташ кулленхи нормăна 200 процент тултарать.

Анчах та вăрманпромхоз çумне çирĕплетнĕ пур районсенчи колхозсем те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсенчи колхозсем малтанхи пекех сӳрĕк ĕçлеççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас ялсовечĕ октябрь уйăхĕнче те ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса яман, халĕ те начар ĕçлет.

Колхозниксем тухăçлăн ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри нумай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Хальхи вăхăтра вăрманта çурран тата лашапа ĕçлекенсен хисепĕ планпа палăртнинчен те ытларах шутланать. Нумай колхозниксем стахановла ĕçлеççĕ. Акă, Алгазино колхозĕн членĕ Прокопьев юлташ нормăна 300 процент таран тултарать. Çавăн пекех вăрман турттарнă çĕрте ĕçлекенсем Павлов, Егоров юлташсем юлашки кунсенче ĕç тухăçлăхне 20 процент ытла ӳстернĕ.

ВКП(б) райкомĕ вăрманта ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе туса пыма уйрăм çынсем уйăрнă. Вĕсем вăрманта ĕçлекенсене Сталин юлташăн докладне ăнлантарса параççĕ тата юлашки хыпарсене пĕлтерсе тăраççĕ.

Донбасра çĕркăмрăкĕ кăларасси ӳсет

«Ворошиловградуголь» комбиначĕн горнякĕсем 130 шахтăна юсаса çитернĕ. Топливо кăларасси пур трестсенче те ӳссех пырать. Хальхи çĕркăмрăкне стахановла движени çуралнă вырăнта—Кадиевкăра та кăлараççĕ. «Красный луч» тата «Боково Антрацит» шахтерĕсем лайăх топливо параççĕ. Планран ирттерсе кăларнă 75.000 тонна çĕркăмрăкне Мускава, Ленинграда, Сталинграда тата Харькова парне шучĕпе янă.

Финагентсем ăмăртаççĕ

ШАХАСАН. («**Чăваш Коммуни» корр.**). Районри финанс агенчĕсем пĕр-пĕрин хушшинчи социализмлă ăмăртăва вăйлатсах пыраççĕ. Вĕсем хăйсем умне 4-мĕш кварталти плана срокчен тултарас задача лартнă. Нумайĕшĕсем çав задачăна ăнăçлăн пурнăçлаççĕ.

Анат Сурăмĕнчи финагент-комсомолка Анастасия Степанова 4-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана пĕр уйăх хушшинчех 82 процент чухлĕ тултарчĕ. Атнаш ялсоветĕнчи финагент Михайлова, Шăхасан ялсоветĕнчи финагент Коновалова, Енĕш ялсоветĕнчи финагент Данилов юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ĕççынниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн туса пыраççĕ, финанс секцийĕсемпе колхоз активне те ку ĕçе явăçтараççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унта укçа-тенкĕ пухасси ăнăçлăн пулса пырать.

Анчах укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе чылай ялсовечĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Матшӳ ялсоветĕнчи финагент Мария Иванова укçа-тенкĕ пухас ĕç кăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларать. Вăл час-часах ĕçе тухмасть, прогул тăвать. Ялсоветпа колхоз активне укçа-тенкĕ пухас ĕçе явăçтарман. Çавăнпа ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе 3-мĕш квартал планне тултарайман. 4-мĕш квартал планне тултарасси питех те юлса пырать.

Ст. АСЛАН.

СУД

Колхоз тыррине вăрланăшăн

Çак кунсенче Тăвай районĕнчи халăх сучĕ «1-ое мая» колхозри (Тăвай районĕ) Н. Долгова, О. Карлова колхозницăсен киревсĕр ĕçĕсене пăхса тухрĕ. Вĕсем итем çинчен тырă турттарнă чухне тырă вăрланă. Вĕсене çак ĕçшĕн суд икĕ çуллăха тĕрмене хупмалла турĕ.

Пĕлтерӳ

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) агитколлективсен руководителĕсем, докладчиксем тата беседчиксем валли инструкцилле доклад пулать. Доклад теми: «С. М. Киров — пирĕн Тăван çĕршывăн çуллăмлă патриочĕ».

Докладчик — Ялхуçалăх институчĕн преподавателĕ Анисимова юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкарти арман комбинатне старши бухгалтер кирлĕ.
Условисем çинчен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15, Чувашмельтрест. 2—1.

Чăвашмедснаба плановик-экономист тата секретарь-машинистка васкавлă кирлĕ.
Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 7, Чувашмедснаб. 2—1

Художествăллă пултарулăхăн ялсенчи тата район центрĕсенчи смотрне организованно ирттерер

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ тата РСФСР Наркомпросĕ йышăннă тăрăх, кăçалхи октябрĕн 25-мĕшĕпе 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче художествăллă пултарулăхăн ялсенчи тата район центрĕсенчи смотрне ирттермелле. Смотр тĕллевĕ —художествăллă пултарулăх коллективĕсен нумай вăхăт хушшинчи пархатарлă ĕçне пăхса тухасси, талантлă организаторсемпе исполнительсен çĕнĕ йышне художествăллă пултарулăх çине явăçтарасси, çĕнĕ идейлă художество тĕлĕшĕнчен шайне ӳстересси пулса тăрать.

Смотр колхозниксене, ялти интеллигенцие, рабочисене, служащисене художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçне явăçтарма, художествăллă пултарулăх кружокĕсене, бригадăсене, коллективĕсене çĕнĕрен туса йĕркелеме пулăшма тивĕçлĕ.

Смотр, çавăнпа пĕрлех, художествăллă пултарулăх коллективĕсен репертуарне Хĕрлĕ Çарăн геройлăхĕ, паттăрлăхĕ çинчен, совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи паттăрла ĕçĕ, патриотизмĕ çинчен калакан çĕнĕ произведенисемпе пуянлатма тивĕçлĕ.

Смотр иртерес ĕçре ертсе пыма республикăри партийнă, комсомол, искусство, хаçат работникĕсенчен, артистсенчен, режиссерсенчен, писательсенчен тата художниксенчен, композиторсенчен ятарласа комисси турĕ. Комиссине çак юлташсем: А. Калган (Искусство ĕçĕсен управленийĕ), Медведев (Наркомпрос), Слобов (ВКП(б) Обкомĕ), Л. Михайлов (ВЛКСМ Обкомĕ), композитор Лисков, художник Спиридонов, Л. Н. Родионов (Чăвашсен Государство Академи театрĕн художествăллă руководителĕ), Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. А. Алексеев, А. Эсхель («Чăваш Коммуни» хаçат редакторĕ), А. Студенецкий («Красная Чувашия» хаçат редакцийĕ).

Çавăн пекех смотр иртерме ялсенче — ялсовет çумĕнче, районсенче — ĕççынни депутачĕсен районсовечĕ çумĕнче ятарласа уйрăм комиссисем организациленмелле. Ялсовет комиссийĕн составне 5—7 çын пулмалла. Комисси составне ялсоветсен, комсомол организацийĕн председателĕсем, вулав çурчĕн заведующийĕсем, шкулсен тата художествăллă пултарулăх кружокĕсен руководителĕсем, районри комиссин представителĕ кĕме тивĕçлĕ. Ялсенчи комиссисен составне, çавăн пекех комисси председательне районри комиссисен пăхса тухса çирĕплетмелле.

Çак питех те кирлĕ мероприятие иртернĕ çĕре комсомол организацийĕсен уйрăмах активлăн хутшăнмалла. Художествăллă пултарулăх смотрне пуринчен ытларах çамрăксем хутшăнаççĕ. Художествăллă пултарулăх коллективĕсем яланах çамрăксем хушшинчен [illegible]

Ялти комиссисем малтанах юрăçсене, музыкантсене, ташă ăстисене, баянистсене, купăсçăсене, ăста вулакансене, халапçăсене, такмакçăсене, художниксене, тĕрĕ тĕрлекенсене, шăтăкла çыхакансене, йывăçран касса илемлĕ япаласем хатĕрлекенсене тупса палăртмалла, вĕсене смотра активлăн хутшăнтармалла. Ялти комисси ялсовета смотр хатĕрленмелли календарлă план тăвас пулать, смотр иртерме вулав çурчĕсене, клубсене [illegible] хатĕрлемелле. [illegible]

Районри комиссисем смотра ирттерме [illegible]

Смотр октябрĕн 25-мĕшĕнче пуçланнă. Анчах районсенчи комиссисем [illegible]

Партипе совет организацийĕсем искусство, çутĕç тата комсомол организацийĕсене художествăллă пултарулăхăн ялсенчи тата район центрĕсенчи смотрне ирттерме [illegible] пулăшмалла.

Драмкружок ĕçне аваналтрĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Аслă Çĕрпӳ ялсовечĕ çумĕнчи драмкружок юлашки вăхăтра аван ĕçлеме тытăнчĕ. Çак кунсенче унта И. И. Захаровăн ертсе пынипе, пысăк концерт пулса иртрĕ. Концерта пуринчен ытла чăваш тата вырăс юррисемпе ташшисене питĕ кăмăла кайрĕç. Концерт курма 400 çын ытла пычĕ.

Концерт программине отечественнăй вăрçă геройĕ пулеметчик И. Смирнов çинчен хунă юрă та пулчĕ. Унта уйрăмах Кузнецова, Тарасова, Софронова, Ухкина юлташсем тăрăшрĕç.

Л. УДИНА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1878 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 п. л. Тираж 14.400 экз.